"Сывлăх" наци проекчĕ пурнăçланнине тишкеретпĕр

# Сăмах ĕçрен уйрăлса тăмасть



Район Акатуйĕнче ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров районăн тĕп врачне В.Г. Данилова диагностика оборудованийĕпе васкавлă пулăшу автомашинисем илме свидетельство пачĕ.



Района наци проекчĕпе килнĕ васкавлă пулăшу машинисем паян кулленех ĕçре.

*Юлашки çур çул ытларахра Раççей Президенчĕ В. Путин кун-çул панă наци проекчĕсем общество пурнăçне тепĕр утăм малалла аталантарассипе вăй илсех пыраççĕ. Вĕсем Раççейре пурăнакан кашни çынна пырса тивеççĕ, кашнинех пурнăç çине çĕнĕлле пăхма, çĕнĕ ӳсĕмсем палăртма хавхалантараççĕ. "Сывлăх" наци проекчĕ çинче чарăнса тăрар-ха паян. Мĕнле улшăнусем илсе çитерчĕ-ха вăл пирĕн района, Муркаш Енри сывлăх хуралçисем кун ыйтăвĕнчен айккинче тăрса юлмаççĕ-и? Çак ыйтусем çине хурав шыраса "Районти тĕп больница" муниципаллă сывату учрежденийĕн тĕп врачĕпе Владислав Григорьевич ДАНИЛОВПА тĕл пултăмăр. Халĕ ку калаçăва вулакансене сĕнетпĕр.*

**– Июнĕн 10-мĕшĕнче Муркашсен Акатуйĕнче ЧР Президенчĕ Н.Федоров района çĕнĕ диагностика оборудованийĕпе васкавлă медицина пулăшăвĕн машинисене илме 5 миллион та 490 пин тенкĕлĕх свидетельство пачĕ. Паян пĕлес килет, сăмахпа калани ĕçе кĕрсе пырать-и?**

– Чăваш Республикин Президенчĕн ырă енĕ вăл – сăмахпа каланине ĕçе кĕртсе пыни. Наци проекчĕпе килĕшӳллĕн паянхи кунччен района ультрасасăллă икĕ стационар аппарачĕ пĕр миллион ытла тенкĕлĕх, васкавлă пулăшăвăн 4 санитари автомашини 1,5 миллиона яхăн тенкĕлĕх килсе çитрĕç. Автомашинăсем ĕçе те кӳлĕнчĕç ĕнтĕ. Ĕнер кăна районти тĕп тата 2-мĕш номерлĕ больницăсем валли лаборатори оборудованийĕн икĕ комплектне тата васкавлă пулăшăвăн тепĕр икĕ автомашинине илсе килтĕмĕр. Йышăнмалла, пирĕн президент васкавлă пулăшу машинисен паркне тĕпрен çĕнетесси пирки каланине пурнăçларĕ. Çывăх вăхăтрах района çынсен чирĕсене пахалăхлă тĕпчесе тивĕçлĕ сиплев палăртма пулăшакан ытти оборудовани те килсе çитмелле. Çапла вара наци проекчĕ ĕçлени яр уççăн курăнать.

**– Наци проекчĕ ĕçленипе килĕшӳллĕн районти сывлăх хуралĕнче мĕнле малтуртăмлă ĕççем пулса иртрĕç-ха?**

– Каласан нумай калама пулать, анчах паян эпĕ чи курăмлисем çинче çеç чарăнса тăратăп. Наци проекчĕ 4 тĕп енрен тăрать. Пĕрремĕшĕ – сывлăх сыхлавĕн пуçламăш звенин ĕçне лайăхлатасси. Ку ĕç пур енлĕ пулса пырать. Участокри терапевтсен, педиатрсен, пĕрлехи практика врачĕсемпе вĕсене пулăшакан медицина сестрисен ĕç укçине ӳстернипе пĕрлех вĕсен пулăшăвне халăха çывăхарах йĕркелеме пуçларăмăр. Июльтен фельдшерсемпе васкавлă пулăшура ĕçлекенсен ĕç укçийĕ те ӳсĕ, çемье медицини тепĕр утăм малалла тăвĕ. Юлашкинчен каланине çирĕплетме. Çывăх вăхăтрах капиталлă юсав хыççăн Уйкас Янасалти ялти врач амбулаторийĕ çумĕнче çемье врачĕн уйрăмĕ ĕçлеме пуçлĕ. Иккĕмĕшĕ– тĕрлĕ чирсенчен вакцинăлас ĕç анлăн малалла пыни. Районти 5 пин ытла ача "В" гепатитран икĕ тапхăрпа вакцинăлав витĕр тухрĕ. Виççĕмĕшĕ. Районти больницăсенче çемье планлассипе тата ача çуратнă чухнехи пулăшу мелĕсене анлăлатассипе пысăк ĕççем иртеççĕ. Юлашки çур çулта кăна йывăр çын хĕрарăмсене паракан сертификатпа наци проекчĕпе килĕшӳллĕн 500 пин тенкĕне яхăн укçа килсе çитрĕ. Тăваттăмĕшĕ – бюджет сферинче вăй хуракансене тата сывлăхшăн йывăр условисенче ĕçлекенсене хушма диспансеризаци тăвасси. Ку ĕç пур енлĕ малалла пырать. Çакна валли ĕнтĕ района хушма медоборудовани килме пуçларĕ.

**– Эсир каланине пăхсан пирĕн сывлăх çирĕп сыхлавра теме пулать. Кун пирки мĕн шутлатăр?**

– Эсир пирĕн тăрăшулăха çапла йышăнни медицина ĕçченĕсене хавхаланullăрах ĕçлеме хĕтĕртет. Эпир çапла тăвăпăр та. Пире çакнашкал вăй хума РФ Президент Администрацийĕпе Раççей Правительстви, ЧР Президент Администрацийĕпе ЧР Правительстви пĕрпек килĕшӳллĕ ĕçлени хавхалантарса пырать. Çак ĕç хыçĕнче вара миллионшар çын шăпи, вĕсен сывлăхĕ, пурнăç пахалăхĕ, ĕмĕр вăрăмлăхĕ. Ку çул çинче хамăр ума лартнă тĕллевсене пурнăçлама пирĕн ăста специалистсем те, пĕлӳпе пултарулăх та çителĕклĕ. Çапла вара район медицинин малалла утма-аталанма условисем пур.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

"Симĕс ĕç çи" пахалăхĕ – хĕл хырăмĕшĕн те

# Наци проекчĕ апат пахалăхĕпе те çыхăннă

***РФ Президенчĕ В. Путин ял хуçалăхĕпе çыхăнтарса палăртнă наци проекчĕ кун çути курнă хыççăн Раççейри ял хуçалăхĕ пĕрремĕш "симĕс ĕç çи"ирттерет. Малашнехи аталанăвăн мĕнле никĕсне хывĕ ку чухне çĕр ĕçченĕ? Наци проекчĕпе ял хуçалăхне пулăшма пăхнă утăмсене йышăнма хатĕр-и пирĕн хресчен? Çак ыйтусем çине хурав шыраса район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Анатолий БЕЛОВ районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци пуçлăхĕн диагностика енĕпе ĕçлекен çумĕпе Людмила Алексеевна БОЯРИНОВАПА тĕл пулнă, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче выльăхсем валли уяр кунпа усă курса мĕнле пахалăхлă апат янтăланипе тата обществăлла выльăх-чĕрлĕхе продуктивлăха чакармасăр хĕл каçарма мĕн чухлĕ апат кирлипе паллашнă, паха апатăн перекет çулĕпе кăсăкланнă, хăш-пĕр танлаштарусем тунă: ĕç çине шут виçипе çеç мар, пахалăх тĕлĕшĕпе те пăхмалла. Апат виçи хисепĕпе сумлах курăнмасан та, пахалăхĕпе çӳллĕ шайра пулсан, пысăк продуктивлăх никĕсленесси тата экономика тĕрекленесси куç кĕрет. Ку вăл кирек хăш ĕçченшĕн те паян тĕп тĕллевре пулмалла.***

**– Людмила Алексеевна, кун таврăнчĕ çеç-ха та çитес хĕл кунĕсем инçетре тесе юптаруri пек юрласа сиккелесе çӳрени хӳре вĕçне туй киличчен пулнине манас марччĕ...**

– Эсир мĕн каласшăнне çур сăмахранах ăнлантăм. Вĕсем мĕнлине хаçат вулакан та умма кăларчĕ-тăр. Инçетри вăл çитĕ, шурă юр çийĕн вара сенаж-утă хатĕрлеймĕн. Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ тенĕ-çке ваттисем. Паян, авă, выльăх апачĕ янтăламалли тапхăр пырать. Хăйне евĕр пысăк ответлăхлă вăл. Çак кунсемпе туллин усă курса пирĕн районăн çитес хĕл валли маларах палăртнă планпа 12752 тонна паха утă, 25222 тонна сенаж, 21030 тонна силос хатĕрлесе хумалла. Ку тĕллевпе паян хирте иртен пуçласа каçчен выльăх апачĕ хатĕрлекен 34 комбайнпа 40 косилка тата вуншар трактор-машина апат турттарнă çĕрте ĕçлеççĕ. Вĕсемпе ĕçлекенсен тата уй-хир бригадисен ĕçченĕсен кĕске хушăрах 10970 гектар çинчен нумай çул ӳсекен курăксене, 1713 гектартан пĕр çул ӳсекен курăксене пуçтарса кĕртмелле. Нумайăи-сахалли пирки калаçмăпăр, анчах ĕçĕ çителĕклипех. Умра – çак ĕçсене пахалăхлă пурнăçласси. Утă уйăхĕн иккĕмĕш вунăкунлăхĕ вĕçленнĕ май "симĕс ĕç çийĕн" малтанхи кăтартăвĕсем пирки те калама юрать. Кунта хальлĕхе лăпланмалли лару-тăру мар-ха. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем тунти кун тĕлне нумай çул ӳсекен курăксене 8402 гектар (77 процент), пĕр çул ӳсеkennисене 201 гектар (12 процент) çулнă. Çак лаптăксем çинче тусаирттернĕ ĕç хресченне 6370 тонна (50 процент) утă, 13734 тонна (54 процент) сенаж, 9780 тонна (47 процент) силос хатĕрлеме май панă. Кунта манăн уйрăммăн выльăх апачĕн пахалăхĕ çинче чарăнса тăрас килет. Куратпăр ĕнтĕ, кăçалхи типĕ çанталăк уй-хирсене ешĕл массăран пуянах тумарĕ. Кун пек чухне хисеппе çитменнине пахалăхпа саплаштарасси питех те вырăнлă ыйту.

**– Калаçу выльăх апачĕн пахалăхĕ çине куçнăран ыйтас килет: ял хуçалăх производство кооперативĕсенче ку ĕçе тивĕçлĕ шайра йĕркеленĕ-и?**



– Эсир кун йĕркинче тăракан чи çивĕч ыйтусенчен пĕрне тапратрăр. Пĕлетпĕр, умри йывăрлăхсене хисеппе мар, пахалăхпа çĕнтермелле. Пĕлетпĕр, анчах... Акă, сенаж хывассинех илер. Кунта çулнă курăка технологие пăсса кăштах кушăхтармасăрах ямăна хунăран сенаж "пиçнĕ" вăхăтра масса пахалăхĕ силоса куçса каять. Çухату çак цифрăсенчен аван курăнать: пăрça йышши культурăран технологие пăхăнса хывнă натураллă нӳрĕклĕхлĕ сенажра апат пахалăхĕ 0,4 центнер апат единици пулсан, сенажран силоса куçнă массăра – 0,23 центнер. Çакăнпа пĕрлех ку апатра каротин, протеин т. ыт. япаласен хисепĕ чакать те выльăхсем кирлĕ чухлĕ тутлăхлă япаласемпе пуян апата илеймеççĕ. Çакăн хыççăн выльăхсен организмĕнче веществосен ылмашăвĕ пăсăлать (нумай хуçалăхра вара çакна саплаштарма выльăхсене микро- тата макрохутăшсем параймаççĕ те), пахалăхсăр апат куллен укçа паракан сĕт производстви çинче каялла утăмпа палăрать, выльăхсен ӳт хушаслăхĕ чакать, ĕнесем вăхăтра пĕтĕленесси уксахлама пуçлать, пăрусем начар çураласçĕ тата вĕсен чирлеслĕхĕ ӳсет, апатра çу кислоти вăй илни китоз чирне çул уçать те сĕте сутма юрăхсăр тăвать, пăрусен иммунитетне вăйсăрлататать. Вăхăт иртнĕ май асăннă çитменлĕхсем вăй ан илччĕр тесен, апата паянах тĕрĕслеттерсе тăмалла. Çакă производствăна планлама май парать. Эпир хамăр енчен силос-сенажа 7 кăтартупа, утăна 5 кăтартупа тĕрĕслеме хатĕр. Татах та туллирех тĕрĕслеве Çĕрпӳри агрохимцентрта тума пулать. Кăçал çак ĕççем унта та, кунта та тӳлевлĕ. Анчах апат пахалăхне пĕлни продуктивлăха планлама май панине шута илсен, çав тӳлев нумай хут пысăкрах виçепе каялла таврăнать. Выльăх апачĕ янтăлассипе хуçалăхсем пĕрремĕш кун мар ĕçлеççĕ пулсан та, пахалăх тĕрĕслевĕ пирки шутлани курăнсах каймасть. Çав вăхăтрах июлĕн 7-мĕшĕнче выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци пуçлăхĕ Н. Яковлев хатĕрленĕ апат пахалăхне тĕрĕслессине вăйлатасси пирки ятарлă приказ кăларни пирки те манас марччĕ. Унпа килĕшӳллĕн патшалăх ветеринари службин специалисчĕсене апат пахалăхне тĕрĕслесе тăма хуçалăхсене çирĕплетнĕ, вырăнсенче агрономсемпе зоотехниксенчен тата ветеринарсенчен апат пахалăхне тĕрĕслеве ăсатма комисси тума хушнă, çак тапхăрта хуçалăхсенчен кашни юн кун районти ветлабораторие хатĕрленĕ апатсен тĕслĕх виçисене нӳрĕкпе каротин палăртма тата пĕтĕмĕшле зоотехника анализĕ туса класнăçе кăтартма "Чувашский" агрохимцентра тăраттмалла, кашни эрне кун мĕн чухлĕ тата епле пахалăхлă апат хатĕрлени пирки пĕлтерсе тăмалла, апат хатĕрлес ĕçре малта пыракан технологисене çул памалла. Анчах вырăнсенче апат пахалăхĕ çине çителĕклĕ тимлĕх уйăрманни курăнать. Паянччен симĕс массăна "Передовик" 2 тĕслĕх, "Рассвет" 3 тĕслĕх, Ленин яч. хис. хуçалăх утăна пĕр тĕслĕх çеç тĕрĕслеттерчĕç. Çакă питех те çителĕксĕр. Апат пахалăхне пĕлмесĕр выльăх отрасльне епле хĕле кĕртĕпĕр-ха? Ыйту усă тăрать. Çакăнпа пĕрлех утă хатĕрлес ĕç хăш-пĕр хуçалăхсенче питех те вăрах пырать. Хуçалăхсен, тĕрĕссипе, августăн 1-мĕшĕччен хатĕрленĕ утăна пĕтĕмпех тĕрĕслеттермелле пулсан, июлĕн 17-мĕшĕ тĕлне К.Иванов яч. хис. хуçалăх утăна мĕн кирлин 27 процентне, "Передовик" 22 процентне, "Лидер" тата "Рассвет", "Хлебороб" хуçалăхсем 33–37 процентне çеç янтăлама ĕлкĕрнĕ. Çакă шухăшлаттармасăр тăма пултараймасть. Апат пахалăхне вăхăтра тĕрĕслеттерессишĕн хуçалăх ертӳçисен яваплăрах пуласчĕ. Паян эпир симĕс масса пахалăхне тĕрĕслейретпĕр, тепĕр уйăхран вара – сенаж пахалăхне. Технологие пăхăнса хатĕрленĕ сенаж-силосра çу кислоти пачах пулмалла мар. Пĕлтĕр вара вăл "Нива" чикĕллĕ яваплăхлă обществăра, Чкалов яч. хис., Чапаев яч. хис., "Рассвет" хуçалăхсенче 3–4-шар процент пулнăччĕ.

Уйрăм сăмах утă пахалăхĕ çинчен. Хуçалăхсенче часах çулса пăрахнă курăк хĕвел çинче нумай выртнине курма пулать. Кĕскен каласан, çакă вăл – утă пахалăхне çухатни. Типсе саралса улăм пулса юлнă утăра каротин юлмасть. Çавна пула "утăри" чылай витамин организма усă памасăрах каяша тухать. Кун хыççăн сĕтри çу хисепĕ чакать, веществосен ылмашăвĕ япăхланать, пĕр çитменлĕх теприне çуратать, çак çитменлĕхсем пăрусем çине куçнă май хуçалăхсенче кĕтӳсене çĕнетесси уксахлама пуçлать, тутлăхсăр апат ĕнесен сервис тапхăрне тăсни (ĕнесен, тĕрĕссипе, пăруланă хыççăн икĕ уйăхра пĕтĕленмелле), сĕт çухатăвне ӳстерни çине куçать.

**– Кăçал апат тĕрĕслессине хуçалăхсем пуçăнманнине мĕнле хаклама пулать? Сăмах май пĕлтĕрхи апат пахалăхĕ пирки каласа хăварни те хăшĕ-пĕриншĕн асăрхаттару вырăннех пуласса шанас килет.**

– Ыйтăва кун евĕрлĕ çавăрнипе килĕшмесĕр тăма çук, мĕншĕн тесен куç умне çултан-çул пĕр йышши йăнăшсемех тухаççĕ. Акă, пĕлтĕр хатĕрленĕ 10680 тонна утăран хуçалăхсем 8263 тоннине çеç тĕрĕслеттернĕ. Унта пĕрремĕш класли – 676 тонна, иккĕмĕш класли – 2365 тонна, виççĕмĕш класли – 3746 тонна, классăрри 1476 тонна пулнăччĕ. "Передовик", Ленин яч. хис., Мичурин яч. хис. хуçалăхсенче класнăçсăр утă мĕн янтăланин 62–52 проценчĕ пулни вырăнсенчи ĕç пахалăхне яр уççăн кăтартса парать. Пахалăх ыйтăвĕ сенаж-силос янтăланă çĕрте те ыррипе пит уйрăлсах тăмасть. Пĕлтĕр хуçалăхсем хатĕрлесе хăварнă 7805 тонна сенажран 2530 тоннине çеç тĕрĕслеттернĕ пулсан, 1700 тонни 3-мĕш класа çеç ларнă.

**(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).**